16-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЙ 21 ЭРНЕКУН 105(6342) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

42. **Екатерина Николаевна Иванова** — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 4-мĕш тракторнăй бригадин трактористки. Вăл У-2 тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 54 гектар сухаланă, 18 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

43. **Красноармейски МТС-ĕнчи М. Ф. Хрисанфов ертсе пыракан тракторнăй бригада.** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 250 гектар вырăнне 260 гектар сухаланă, 237 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

44. **Красноармейски МТС-ĕнчи И. К. Карпов ертсе пыракан тракторнăй бригада.** Вăл планпа палăртнă 218 гектар вырăнне 280 гектар сухаланă, 250 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

45. **Василий Егорович Егоров** — Красноармейски МТС трактористчĕ. Вăл, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 70 гектар вырăнне 130 гектар сухаланă, 80 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

46. **Серафима Ивановна Иванова** — Красноармейски МТС трактористки. Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе планпа палăртнă 70 гектар вырăнне 116 гектар сухаланă, 159 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

47. **Дария Егоровна Егорова** — Красноармейски МТС трактористки. Вăл У-2 тракторпа ĕçлесе планпа палăртнă 60 гектар вырăнне 80 гектар сухаланă, 97 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

48. **Матрена Ермолаевна Анисимова** — Красноармейски МТС трактористки. Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе планпа палăртнă 70 гектар вырăнне 130 гектар сухаланă, 35 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

49. **Красноармейски МТС-ĕ** (директорĕ **В. К. Константинов**, политотдел начальникĕ **М. Е. Арзамасов**, старши механикĕ **Б. И. Виноградов**). МТС майăн 14-мĕшĕ тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 104,5 процент тултарнă.

50. **Красноармейски МТС-ĕнчи 1-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Я. Белов**). Бригада планпа палăртнă 218 гектар вырăнне 290 гектар сухаланă, 133 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

51. **Красноармейски МТС-ĕнчи 2-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. П. Павлов**). Бригада планпа палăртнă 291 гектар вырăнне 310 гектар сухаланă, 120 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

52. **Красноармейски МТС-ĕнчи 11-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. Павлов**). Бригада планпа палăртнă 300 гектар вырăнне 330 гектар сухаланă, 110 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне кăтартуллăн ирттерер

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кăçалхи майăн 23-мĕшĕпе июнĕн 14-мĕшĕ хушшинче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне ирттерме йышăннă. Республикăра кроса ирттерме оргкомитет тунă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ нумай пулмасть профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне хатĕрленесси тата ăна ирттересси çинчен сÿтсе-яврĕ. ВКП(б) Обкомĕ партирайкомĕсемпе горкомĕсене кроса оборонăллă мероприяти вырăнне шутласа, лайăх хатĕрленсе ирттерме хушрĕ. ВЛКСМ Обкомне, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен Комитетне тата профсоюзсен Обкомĕсене кросс пуçланиччен хатĕрленÿ ĕçĕсене тĕплĕн туса çитерме — оргкомитетсемпе судьясен коллегийĕсене тума, тикĕс мар вырăнта чупас, граната ывăтас, пластунла шăвас т. ыт. тĕлĕшпе ăмăртусем туса ирттерме, кроса профсоюзпа комсомолăн мĕнпур организацийĕсене, çавăн пекех ĕççыннисен анлă сийĕсене явăçтарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушрĕ. Чăваш АССР Наркомздравне кроса хутшăнакансен сывлăхĕсене вăхăтра тĕрĕслесе тухма хушрĕ.

Кросс пуçланиччен икĕ кун çеç юлчĕ. Анчах республикăри чылай вырăнсенче кроса начар хатĕрленеççĕ. ВЛКСМ Советски тата Канаш райкомĕсенче кроса хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Райкомол секретарĕсем Серебряковăпа Павлова юлташсем кроса ирттерес ыйтупа сахал интересленеççĕ.

ВЛКСМ Канаш райкомĕн (секретарĕ Павлова юлташ «кроса ирттерес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт инспекторĕн ытларах ĕçлемелле, манăн ăна пулăшмалла», — тесе хăйне-хăй лăплантарса пурăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ комсомолăн «Броневик», «Акатуй», Калинин тата Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем кросăн положенийĕпе те паллашман. Комсомолăн районри нихăш организацийĕнче те тренировкăллă занятисем ирттерме тытăнман.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе Калинино районĕ лайăхрах ĕçлет. Унта, райсовет исполкомĕн физкультурăпа спорт ĕçĕн инспекторĕ В. Горшков юлташ пĕлтернĕ тăрăх, майăн 19-мĕшĕ тĕлне 455 команда организациленĕ. Вĕсенче комсомолецсемпе профсоюз членĕсем 295 çын. Кроса пĕтĕмпе 4.000 çын хутшăнать. Кросс участникĕсен сывлăхĕсене тĕрĕслеме тытăннă. Педагогика училищинче (военрук К. Николаев) кроса ирттерме 45 команда организациленĕ. Халĕ тренировкăллă занятисем ирттереççĕ. Кроса хатĕрленнĕ май, педучилищĕре 14 обществăллă инструктор хатĕрленĕ. Çавăн пекех Уйкас Юнтапари вăтам шкулта та кроса хутшăнма 235 ачаран 41 команда организациленĕ, 10 инструктор хатĕрленĕ.

Калинино районĕнче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне ирттерме оргкомитет тата судьясен коллегине тунă. Кроса ирттермелли пособисене пĕр организацирен тепĕр организацине куçарма пăхса хунă.

Кроса хатĕрленнĕ май, Калинино районĕнчи чылай шкулсемпе колхозсенче ГТО значокĕн çуллахи нормисене парассине организациленĕ.

Анчах, тÿрех калас пулать, республикăри хуласемпе чылай районсенче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне ирттерес тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ-ха.

Кросс пуçланиччен хатĕрленÿ ĕçĕсене хăвăрт туса çитерес пулать. Вырăнти партипе совет организацийĕсен çуллахи кроса организацилесе ирттерме комсомолпа профсоюз организацийĕсене ĕçлĕн пулăшмалла.

Кроса ирттернĕ чухне оргкомитетсен кроса хутшăнакансене йĕркеллĕн шута илсе пымалла. Кросăн требованийĕсене пурнăçласси çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать.

Комсомолпа профсоюзăн çуллахи кросĕ Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ăна ÿрĕк-сÿрĕк ирттерни килĕшÿсĕр япала пулса тăрать.

Профсоюзпа комсомол организацийĕсен, ВЛКСМ райкомĕсен, физкультурăпа спорт инспекторĕсен задачи — профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне организованно ирттересси пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 18-мĕшĕнче фронтра пăллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем тиенĕ 30 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин тата минометсен 10 батарейине пусарнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр соединенин чаçĕсем тăшман çине персе тăнă. Пирĕн артиллеристсем нимĕç артиллерийĕн 4 батарейине пусарнă, 9 дзотпа блиндажа аркатнă, 2 орудие тата грузсем тиенĕ темиçе автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн разведчикĕсем боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Севск районĕнче старши сержант Петраков ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ тăшман тылне вăрттăн кĕрсе кайнă та нимĕç отрячĕпе çапăçма тытăннă. Пирĕн боецсем çав отряда пĕтерсе тăкнă, унтан паха документсем тытса илсе пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр гвардейски минометнăй соединени нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 2 орудине тата 14 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисенче снайперсем 2 кун хушшинче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллерипе минометсенчен персе, 22 дзота, 21 землянкăна, 6 наблюдательнăй пункта аркатнă, 5 орудине тата 12 пулемета пĕтерсе тăкнă.

Ленинград патне пымалли вырăнсенче пирĕн зенитнăй артиллери 4 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем хурал тăракан катерпа баржăна путарнă.

* * *

Ровно облаçĕнчи партизансен ушкăнĕ майăн 12-мĕшĕнче нимĕçсен хĕçпăшалсем тиенĕ 2 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 25 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Темиçе кун иртсен, партизансем хурса хăварнă минăсем çине пырса кĕрсе, тăшманăн тата тепĕр поезчĕ сирпĕннĕ. Партизансен Богдан Хмельницкий ячĕпе хисепленекен отрячĕ шоссе çулĕ çинче тăшманăн штаб автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 3 нимĕç офицерне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен персе ÿкернĕ «Юнкерс-88» йышши самолечĕн тыткăна лекнĕ радисчĕ Ганс Хаузер фельдфебель çапла каласа панă: «Нимĕç çарĕ фронтсенче пысăк поражени тÿснине пула нумайĕшĕ Германия çĕнтерессине ĕненми пулчĕç. Салтаксем кăна мар, летчиксем те питĕ ывăнса çитнĕ. Нумайĕшĕ нимĕç çарĕ поражени тÿсесси çинчен уççăнах калаçаççĕ. Лейтенант П. нумаях пулмасть мана çапла каларĕ: «Халĕ, Германин çĕнтерме нимĕнле шанчăк та юлман чухне, вăрçа малалла тăсса пырса çĕнĕ жертвăсем тума сăлтав çук», терĕ.

Икĕ уйăх каярах эпĕ Венăра пултăм. Хулара террор хаярланса кайнă. Гестапо ÿпкелешекеннисене хаяррăн тыткалать. Кашни кунах хаçатсенче вăрçăра поражени тÿсесси çинчен калаçнăшăн тата саботаж тунăшăн асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтереççĕ. Анчах, апла пулсан та, çынсем вăрçă пирки тата гитлерла режим пирки хытăрах та хытăрах тарăхаççĕ. Австрия кĕрекен 17-мĕш çар округĕнчи полицин обер-фельдфебелĕ Наас мана çапла каларĕ: «Çав округра нимĕç çарĕнчен тарса кайнă салтаксем нумай пытанса пурăнаççĕ», — терĕ. Австри халăхĕн питĕ пысăк пайĕ Германия поражени тÿстерччĕ тесе тăраççĕ, Гитлер тиранийĕнчен çăланас мĕнпур шанчăка çав шухăшпа çыхăнтарса тăраççĕ».

* * *

Воронеж облаçĕн нимĕçсем пĕр вăхăтра оккупациленĕ районĕсенче гитлерла ирсĕрсем тунă тискер ĕçсем кашни кунах çĕнĕрен палăрса пыраççĕ. Çак кунсенче Буденный ячĕпе тăракан колхозăн конюхĕ пĕр варта çĕр айĕнчен çын алли тухса тăнине курнă. Вырăнти организацисен представителĕсенчен ятарласа тунă комисси умĕнче çав шăтăка чавнă та унтан 47 арçын виллине, 20 хĕрарăм виллине тата 10 ача виллине (çулталăк çурăран пуçласа 12 çула çитнисен виллисене) кăларнă. Тĕпчесе тухса çакна пĕлнĕ: пĕлтĕр кĕркунне гитлеровецсем мирлĕ çынсен пысăк ушкăнне арестленĕ те грузовой автомашинăсем çине лартса çав вара илсе кайнă. Унта фашистла çынвĕлеренсем çав арестленĕ çынсене тискеррĕн асаплантарнă. Вилесене нумайĕшне паллайми пулаччен таткаласа-çуркаласа пĕтернĕ. Вилнисем хушшинче Воронеж хулинчи çак çынсене палласа илнĕ: шăл врачне Мария Жарковскаяна, Дзержинский ячĕпе тăракан заводăн рабочине Александр Сигаева, çĕвĕ çĕлекен Софья Козловскаяна тата ыттисене те.

Майăн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 19-мĕшĕнче фронтра пăллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче темиçе чугунçул эшелонне аркатнă, нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 11 батарейине пусарнă, пĕр прожектора çĕмĕрнĕ тата горючи складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пĕр участокра тăшманăн пĕр батальон пехотипе 5 танкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Тăшмана çывăха ярса, пирĕн подразделенисем ун çине пеме тытăннă, 2 нимĕç танкне персе çĕмĕрнĕ, 150 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

Кубанĕн анат пайĕнче нимĕçсем пирĕн икĕ подразделени хушшине кĕрсе кайнă. Пĕр чаçăн боецĕсем тăшмана сасартăк атакăланă та нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Чĕрĕ юлнă гитлеровецсем лодкăсемпе ишсе кайса хăтăлма хăтланнă. Пирĕн артиллери вĕсем çине персе 14 лодкăна нимĕç салтакĕсемпе пĕрлех путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 7 блиндажне тата наблюдательнăй пунктне аркатнă, минометсен батарейине тата артиллерин 6 батарейине пусарнă. Пĕр чаçăн разведчикĕсем темиçе çынна тыткăна илнĕ тата оперативнăй паха документсене тытса илнĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн пехотăпа артиллери 100 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 3 блиндажа, 2 дзота аркатнă, тăшманăн 4 орудине пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн снайперĕсем икĕ кун хушшинче 60 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче пирĕн артиллери тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă танкĕсем çине сасартăк пеме пуçланă. Çав тĕлте темиçе вăйлă взрыв пулнă тата пушарсем тухнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран Хĕвеланăçнерехре тăшман çине артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пĕр гвардейски соединени минометчикĕсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, 13 блиндажа ишĕлтерсе антарнă, 3 вагона тата çар грузĕсем тиенĕ 6 автомашинăна çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталино хулинче Украинăри партизансен отрячĕ нимĕçсен çар мастерскойне пырса тапăннă. Хĕçпăшаллă хурала вĕлерсе пĕтерсе, партизансем çав мастерскоя сирпĕнтерсе янă тата авиабомбăсем, снарядсем, тар хунă складсем çунтарса янă. Пушарсемпе взрывсем икĕ куна пынă.

* * *

Нимĕçсен 51-мĕш сывлăшри эскадрин тыткăна лекнĕ командирĕ — авиаци майорĕ Этберт фон Франкенберт çапла каласа панă: «Эпĕ нумай вăхăт хушши Францире пурăнтăм, унтан Сицилире пурăнтăм. Сицилирен вĕçсе кайса Мальтăна темиçе хут та тапăннă. Февраль уйăхĕнче Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕç войскисен ĕçĕсем начарланнă пирки мана васкаса Хĕвелтухăçне ячĕç. Российăна хирĕç пуçланă вăрçăн иккĕмĕш çулталăкĕ пире питĕ хуйхăртрĕ. Гитлер Кăнтăра, Кавказри нефте тытса илесшĕн, Атăла çитесшĕн, унтан вара Мускава пырса çапасшăн пулчĕ. Çак плансем арканса кайнине халь пурте пĕлеççĕ. Нимĕç çарĕ Сталинград патĕнче халиччен курман пек пысăк поражени тÿсрĕ. Çурçĕр Африкăра итальянецсемпе нимĕç войскисене аркатса тăкни нумай çынсемшĕн кĕтмен çĕртен пулнă япала пулса тăчĕ. Эпир, летчиксем, пĕлетпĕр: нимĕçсемпе итальянец войскисем Тунисра пысăк йывăрлăх тÿсеççĕ, анчах та ĕç çакăн пек час вĕçленессине никам та кĕтмен. Ĕç тата çакăн пирки йывăрланать: оккупациленĕ çĕршывсенчи халăх Германи влаçĕсене хирĕç тăрассине сисĕнмеллех вăйлăлатрĕ. Нумай французсем, норвежецсем, бельгиецсем Сталинградри ĕçсем хыççăнах хавхаланса кайса нимĕçсене хисеплеми пулчĕç. Пурте тенĕ пекех Англипе Америка войскисем Европăна пырса кĕрессине тата Германия поражени тÿсессине кĕтеççĕ. Çаксем ĕнтĕ мана çакăн пек вывод тутараççĕ: Германин çарпа политика лару-тăрăвĕ юлашки çулталăк хушшинче питĕ нумай начарланчĕ, нимĕç çарĕн лару-тăрăвĕ халĕ шанчăксăр».

* * *

Югославири партизансем Приеполапа Биело Поле хушшинчи шоссе çулĕ çинче итальянецсен колоннине аркатса тăкнă. Патриотсем итальянецсен 130 салтакне тата 2 офицерне вĕлернĕ, çар пурлăхĕ тиенĕ 6 автомашинине, 10 пулеметне, пĕр минометне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Итальянецсен 50 салтакне тыткăна илнĕ. Сухой Краинăра патриотсем тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Загорье рудникне тапăннă чухне партизансем электростанцие сирпĕнтерсе янă тата унăн пĕтĕм оборудованине юрăхсăра кăларнă.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пуçланчĕç

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Ишлейри вăтам шкулта пĕлÿ тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕ организованно иртрĕ. Пур классенче те пĕлÿ тĕрĕслевĕсем расписани тăрăх кăтартнă вăхăтра пуçланчĕç. Тĕрĕслевĕн пирвайхи кунĕн итогĕсем вĕренекенсем лайăх пĕлÿ илнине кăтартса пачĕç. 8-мĕш класра вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕ пулса иртрĕ. Тĕрĕслÿре 12 вĕренекен «отлично» паллăсем илчĕç.

4-мĕшпе 7-мĕш классенче тăван чĕлхепе çыру ĕçĕпе испытани тытрĕç. 7-мĕш класра 24 вĕренекенрен 11 вĕренекен «отлично», 8 вĕренекен «хорошо» паллăсем илчĕç. «Плохо» паллăсем илекенсем пĕрре те пулмарĕç.

Шкулти 287 ачаран 78-шĕ «отлично» паллăсем илчĕç. Шкулти учительсем хăйсен ĕçне тăрăшса туса пыни тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕнчех палăрчĕ. Дмитриева, Сергеева, Калинина учительницăсем ачасене çирĕп пĕлÿ парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

З. Митрофанова.

СМОТРА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

КАНАШ. Уçырмари «Комбайн» колхозри драмкружок членĕсем художествăллă пултарулăх смотрне тăрăшса хатĕрленеççĕ. Драмкружок «Телей», «Хуçи таврăнчĕ» тата ытти пьесăсене те лартса панă. Халĕ «Ялта» пьесăна лартма хатĕрленеççĕ.

Смотра ирттерме Сиккассинчи вăтам шкул та тĕплĕн хатĕрленет. Хор кружокĕ çĕнĕ юрăсем вĕренет.

И. Максимов.

СТЕНА ХАÇАЧĔСЕМ ЙĔРКЕЛЛĔ ТУХСА ТĂРАÇÇĔ

КАЛИНИНО. Уйкасри «Комсомолец» колхозра стена хаçачĕпе боевой листоксене вăхăтра тата йĕркеллĕ кăларса пыма пуçларĕç. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кулленхи тата агитмассăллă ĕçĕн организаторĕсем пулса тăчĕç. Колхозра тухса тăракан «Колхозник» стена хаçачĕ (редакторĕ Н. Башкиров) хăйĕн черетлĕ номерĕсенче ĕçре малт- пыракансен опычĕсемпе тĕплĕн паллаштарать, ĕçре кая юлакансене питлет, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма пулăшать.

Колхозра тухса тăракан боевой листоксем те кулленхи ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Халĕ колхозра стена хаçачĕсемпе боевой листоксем çине çыракансен йышĕ те ÿсрĕ.

К. Димитриев.

Республика уйхирĕсенче

Çураки планне 8 район пурнăçларĕç

Вăрнар тата Элĕк районĕсем хыççăн, çураки ĕçĕсене Шупашкар, Елчĕк, Советски, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Ишлей районĕсенчи колхозсем вĕçлерĕç. Ку районсем çурхи тырăсене правительство кăтартса панинчен чылай нумай ирттерсе акрĕç, халĕ планран ирттерсе оборона фончĕ валли тырă акаççĕ.

Советски районри колхозсем çураки планĕнчен ирттерсе 416 гектар акрĕç. Шупашкар районĕнчи колхозсен план тăрăх 1.070 гектар акмалла пулсан, майăн 18-мĕшĕ тĕлне 11.010 гектар акнă. Майăн 20-мĕшĕ тĕлне Елчĕк районĕнчи колхозсем те çураки планне ăнăçлăн пурнăçларĕç. План тăрăх 21.405 гектар акмалла пулсан, кăçал Елчĕк районĕнчи колхозсем çурхи тырăсене пурĕ 21.507 гектар акрĕç. Район çĕрулми лартмалли плана та ăнăçлăн тултарчĕ, оборона фончĕ валли çураки планĕнчен ирттерсе 284 гектар çине тĕштырăсем акса хăварчĕ.

Çуракинче МТС пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕ. Вăл çуракинче тракторсемпе ĕçлемелли плана 148 процент тултарчĕ. МТС вăйлăн пулăшнипе районри колхозсем тĕштырăсен 74,5 процентне сеялкăсемпе акнă.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне район çураки планне ирттерсе пурнăçа кĕртрĕ. Планпа 6.965 гектар акмалла пулнă пулсан, район 7.011 гектар акса хăварчĕ. Районри колхозсем халĕ оборона фончĕ валли тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма планран ирттерсе тырпул акаççĕ, кайран пулакан пахча-çимĕçсене лартаççĕ.

«Правда», Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç, вĕсем çураки планне 7—8 кун хушшинче тултарчĕç.

Я. Маклашкин,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Йĕтĕне ыран-паянах акса пĕтермелле

ПАРАЧКАВ, майăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 10 колхоз çурхи тырăсене, çав шутрах техникăллă культурăсене те, пĕтĕмĕшпех акса пĕтерсе çураки планне пурнăçларĕç. «Факел», «Победа», «Трактор», Ильич ячĕпе тăракан колхозсем 40—50-шер гектар йĕтĕн акрĕç.

Анчах ытти колхозсенче çураки ĕçĕсем, вăл шутрах йĕтĕн акасси те, кая юлса пырать. «Красная Горка» колхоз йĕтĕн 8 гектар çеç акнă. Колхоз председателĕ йĕтĕн вăрлăхĕ çителĕклĕ пулманнине çак таранччен пытарса усранă. «Ударник», Калинин ячĕпе тăракан, «Восход» колхозсем йĕтĕн акма халĕ те пуçламан.

Йĕтĕне çитес ик-виçĕ кун хушшинчех акса пĕтерес ыйтăва сÿтсе явас майпа, ĕнер райсовет исполкомĕ колхоз председателĕсене пухса кĕске канашлу туса ирттерчĕ.

Н. Лазарев.

Пысăк тухăçлă тырпулăн никĕсне аван хывăмăр

КÿКЕÇ. (Телефонпа). Тăван çĕршыв тата Хĕрлĕ Çар ыйтнисене пурне те тивĕçтерсе пырассишĕн тăрăшса, районри колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче хастарлăн ĕçлерĕç. Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене кăçал пирĕн районри колхозсем 8—10 кун хушшинче акса хăварчĕç. Акмалли çĕр лаптăкĕн 58 процентне сеялкăсемпе акнă.

Тăван çĕршыв панă заказа ăнăçлăн тата ирттерсе тултарасси йăлана кĕчĕ. План тăрăх пирĕн кăçал тĕштырăсене тата пăрçа йышши культурăсене пурĕ 8.124 гектар акса хăвармалла пулнă пулсан, колхозсем уйхирти çурхи ĕçсене йĕркеллĕн туса пырса, майăн 10-мĕшĕ тĕлне 8.217 гектар акрĕç. Анчах вĕсем кунпа лăпланса лармарĕç, мĕнпур пек çĕр лаптăкне пĕтĕмпех йышăнса, юлашки пилĕк талăк хушшинче тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене татах 300 гектар ытла акрĕç.

Планран ирттерсе кăçал районри колхозсем оборона фондне хывма 360 гектар, нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма 128 гектар тĕштырă акса хăварчĕç.

Халĕ техникăллă культурăсем акасси вăйлăн пулса пырать. Далмацкая ромашка акмалли плана район пурнăçларĕ. Паянхи куна районри 17 колхоз çĕрулми лартса пĕтерчĕç.

Н. Васильев,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

19. Сарсков колхозник самолет илет

Кăнтăрти çеçенхир
çулăмпа ĕнсе кайнă.
Вутпала пăтранса
вĕрет тĕпсĕр хуран.
Тусан витĕр хĕвел
курăнать суран майлă,
Пăхма çук ун çине,
тен, вăл чăн та суран?!

Канăç çук, сывлăш çук,
шыв та çук çеçенхирĕн.
Пур кашнин чĕрере
пĕр хаярлăх анчах.
Тăшмана чармалла,
çапмалла ăна вирлĕн.
Тăр, боец, виличчен,
тăр, пĕр утăм ан чак!

Нимĕçе илĕртет
Кавказ нефчĕн шăрпийĕ,
Ана Дон кулачи
йĕкĕлтет, уртарать.
Тăшман танкĕ умне
хӳме пек тăр, çĕршывăм
Ху аваллăхунтан
пул эс паттăртарах!

Кантăк куç вилесен
выçă антăхнă çарĕ
Йăтăлла хашкаса
малаллах антăлать.
Халăх ывăлĕсем,
тăшмана тытса чарăр,
Емĕр ан курттăр вăл
ĕмĕрхи Атăла.

Лăпкă Дон хĕрринче
сарăлать йывăр шăршă.
Ку вăл нимĕç çĕрет,
сывлăша варалать.
Хăй çапах хирĕнет,
хăй çапах пирĕн çĕршĕн
Вилесен купи урлă
кĕрет шалалла.

Юнлă йĕр хăварса
танкĕсем ун шăваççĕ.
Нимĕçсен купипе
чыхăнаççĕ шывсем
Нимĕçсен купипе
кĕперсем хывăнаççĕ,
Çавсем урлă каçса
килеç çĕннисем.

Мускав айлăмĕнчи
вутлă çăкăр-тăваршăн
Нимĕç тытнă кăçал
урăх çул, урăх план.
Аслă Атăл çине
çĕмĕрсе вăл тухасшăн,
Мускава хупăрласшăн
таçтан аякран.

Унăн сĕмсĕр планне
чăваш çĕрĕ те кĕнĕ,
Атăлпа тăвалла
вăл шутланă килме.
Вăрăм хĕскĕчпеле
хĕстерме ĕмĕтленнĕ,
Мускава, Мускава
вăл сĕмленнĕ илме.

Картнă çирĕп кунсем
ăсран кайнă ефрейтор.
Юмăç пăхнă картпа,
тухнă вырăнлă карт.
Анчах çав упăте
тĕлĕкре те кĕтмен-тĕр
Ун умне тăрасса
Сталинград.

Улăпла пĕвĕпе
Сталинград тăчĕ хирĕç,
Нихăçан парăнми
çĕршыв крепоçĕ пек.
Сталинград хӳмине
пырса тăрăнчĕ нимĕç
Юнпала вараланнă
чугун сăмсипе.

Тватă уйăх кунта
юн хăсса тĕпĕртетрĕ
Тăкрĕ вут, тăкрĕ бомба
ылханлă çăхан.
Кунчул çăмăр çуман
хулара ĕмĕрте те,
Кун чул пăр та çуман
нихăçан

Хĕвел тулнă садсем
çунчĕç, сӳнчĕç, кĕлленчĕç,
Ӳкрĕç, ишĕлчĕç, вилчĕç
цехсем, корпуссем.
Анчах çак тамăка
пирĕн паттăр çынсем çеç,
Юмахри улăпсем пек,
ирттерчĕç тӳссе.

Тăшмана чаракан —
пулчĕ пирĕн этем вăл,
Унăн харсăр чĕри,
унăн хурçă алли.
Сталинград! Çак сăмах
пулчĕ пирĕншĕн символ,
Пулчĕ çирĕплĕх, чăтăмлăх,
туслăх палли.

Тĕнче куçĕ ялан
Сталинград çинче тăчĕ.
Тĕнчери çĕршывсем
сводкăсем мĕнлине
Куллен-кун сăнаса,
тĕпчесе, тытса пычĕç
Дипломатин чее
сиккекен кӳмине.

Туссем тус пек пулса
пире пулăшрĕç ырăн,
Пире панă танксем
пулчĕç вырăнсăр мар.
Репродуктор умне
тăрса пурте ир-иррĕн
Эпир пĕтĕм чунтан
кĕтнĕ ырă хыпар.

Хыпарсем... Çук вĕсем
çăмăл марччĕ чĕрешĕн.
Анчах шанчăк хурçи
пур-пĕрех тутăхман.
Сталинград тăшманпа
чăн Антей пек кĕрешнĕ,
Урисем ун саман та
çĕртен татăлман.

Вырăс çĕрĕ çинче
çирĕп тăнă çав Улăп,
Пĕтĕм халăх ăна
кӳнĕ аслă вăйхал.
Çĕпĕртен, тайгаран,
Урал тăвĕсем урлă
Килнĕ вĕçĕмсĕр çар,
хĕçпăшал.

Сталинградшăн кашни
чĕринче пухнă çилĕ.
Орлов хăй фронтĕнче
тăкнă шелсĕр кăвар.
Габайдулин та Лаптев,
Винокуров, Ефимов, Васильев,
Кашнин пулнă пĕр шут:
— тăшмана аркатар!

Аркатар тăшмана!
Пурнăçпа сĕмсер вилĕм
Хĕрхенмен пĕр-пĕрне
юнлă тытăçура.
Анчах кĕтнĕ хыпар
тем пулсассăн та килĕ,
Пурнăç вилĕм умне
пулса ӳкмĕ чура.

Кашни каç, кашни ир
эпир кĕтнĕ те çуннă,
Пĕтĕм сулăмĕпе
тапнă пирĕн чĕре.
Сталинград халăхсен
çутă шанчăкĕ пулнă,
Янăранă çак ят
пĕтĕм çут тĕнчере.

Кĕрхи пĕр каçхине
вара пурте сасартăк
Илтрĕç ĕмĕр манми —
наступлени — сăмах.
Юлашки сехетре...
Ӳкнĕ кăмăл хăпартăр!
Паттăр кăмăл, кĕрле
тата сулăмланрах!

Ирпе ирĕн çынсем
пĕр-пĕрне саламлаççĕ.
Сталинград! — тет пĕри;
Сталинград! — тет тепри.
Çынсен кăкăрĕсем
çăмăлраххăн сывлаççĕ
Çăмалраххăн тапать
пур çĕршывăн чĕри.

Станоксем хыттăнрах
çаврăнма тытăнаççĕ.
Ялсенчен хулана
туртăнаç обозсем
Тĕнче ĕмĕр курман
туйăмсем вăранаççĕ,
Чи шалти, чи вĕри,
чи пуян туйăмсем.

Кузьма Минин ĕçне
тăван çĕрĕмĕр курнă,
Анчах ку урăххи,
урăх ĕмĕр кунта.
Мĕнпур пек кĕтесрен
вăрмансем, тусем урлă
Халăх вăйĕ куçать
Çĕнтерӳллĕ фронта.

Кузьма Мининăн ĕçĕ
пулнă аслă, хăватлă,
Анчах çĕр çакăн пек
тĕпренех хускални
Нихăçан та пулман.
Ферапонт Головатый
Самолет туянать
паттăр летчик валли.

Çĕршыва ирсĕрлен
сĕмсĕр нимĕçе хирĕç,
Вырăс çĕрĕ тăрать
пĕтĕм сулăмĕпе.
Вăранаç вăрмансем,
çĕкленет уйĕ-хирĕ,
Халăх вăйĕ кĕрлет
океан хумĕ пек.

Тулса пухăннă вăл,
тăван çĕрĕн хăвачĕ,
Çулпуç сутнă хĕвелĕн
хĕрӳ ăшшипе.
Орлов паттăр валли
самолет заказ пачĕ
Ват колхозник Сарсков,
ун тăван ашшĕ пек.

Самолетсем, танксем
эскадрильăн, колоннăн
Çуралса çитĕнеççĕ
унта та кунта.
Çурхи Атăл çинче
талккишпе пăр таврашăн
Колхоз вăйĕ куçать
çĕнтерӳллĕ фронта.

Виçи çук, чикки çук
халăхсен вăйхавалĕн,
Наступлени пырать
пур енчен малалла.
Авалхи Кремльтен
халăха аслă Сталин
Хĕрлĕ Çар ячĕпе
ыр сунса саламлать.

Пирĕн çар çĕнĕ кун,
çĕнĕ ĕмĕр пуçларĕ.
Хурçăран тăхса тунă
хаяр ункăра
Пĕтрĕ, çунчĕ, кĕлленчĕ
фон Паулюс çарĕ.
Ĕмĕр палăкĕ пулчĕ
тăван Сталинград.

Сталинград! Вăл пире
ĕçре çĕнĕ вăй пачĕ,
Вăл сывхартрĕ
пулас çĕнтерӳ уявне.
Станоксем хыттăнрах,
хăвăртрах çаврăнаççĕ
Вăхăтра пурнăçласшăн
Сарсков заказне.

Аслă Сталин çапла
Сарскова сăмах панă.
Эпир акă завод
аэродромĕнче.
Мĕнчул «кайăк» кунта
тин кăна çунат сарнă,
Иртет ватă колхозник
вĕсен умĕнчен.

Вăл сăнать, тĕрĕслет,
пысăк влаçлă хуçа пек,
Ак Орлов та утать
унпала юнашар.
— Начар мар, — тет колхозник,—
геройăмăр чапĕ,
Самолечĕ те унăн
ан пултăр начар!

Анчах самолетсем
пурте çĕнĕ те лайăх.
Орлов ултă йышши
аппаратпа вĕçет.
— Акă, — терĕ Сарсков,—
ак сана, ăмăрткайăк,
Вĕç эс çиçĕм пулса,
вĕç çӳлте, вĕç инçе!

Ку пач çĕнĕ йышши,
кун çинчен халĕ çеç-ха
Вĕренсеччĕ Орлов
кану вăхăтĕнче.
Ентĕ пирĕн вĕсем
чылай йышлăн вĕçеççĕ
Аслă халăх вăрçин
аслă фрончĕсенче.

Акă вăл, кĕр те лар,
алăкне ярă уçнă:
Кĕрсе лар та вĕçтер
фронталла, малалла.
Чаплă самолета
ватă, тимлĕ колхозник
Куçпа мар,
тĕрĕслерĕ, тĕпчерĕ алпа.

Унтан вăл Орлова
тăван пек ыталарĕ:
— Тур сыхлатăр, Хветут, —
терĕ вăл мучилле.
Çĕршывран нимĕçе
хытăраххăн хăвалăр,
Сывă пул,
çĕнтерӳпе кĕтетĕп киле.

Героя ăшă хум
килсе саврĕ ачашшăн.
Чĕрене ăшă хум
мĕн пек ырă, аван!
Унăн пур тăван çĕр,
унăн пур тăван ашшĕ
Тен, вăл уншăн паян
тăванран та тăван.

Чĕркуçланчĕ Орлов,
тупа турĕ яланлăх:
— Халăх ячĕ çĕре
нихăçан ӳкес çук.
Саншăн таптăр чĕре,
асăмри аслă халăх,
Саншăн эп тĕнчере
тытăп чи тĕрĕс çул!

Унтан тăчĕ Орлов,
самолет ăшне кĕчĕ.
Çĕнтерӳллĕн, хăватлăн
кĕрлеç моторсем.
Акă вăл хăлаçланчĕ,
вылянчĕ, çĕкленчĕ,
Уйăрлу кăмăлне
çилпеле вĕçтерсе.

Ырă çул, сывă пул!
Кунĕ кĕтнĕ пек лайăх.
Çу хĕвелĕ кулать,
Вăхăт шăп кăнтăрла
Çĕнĕ самолетпа
ывăнми ăмăрткайăк
Тухса кайрĕ татах
фронталла.

1943 çул.

Вĕçĕ.

Юлашки. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.

Джозеф Э. Дэвис господин Мускава килни

Майăн 19-мĕшĕнче Мускава Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн личнăй представителĕ Джозеф Э. Дэвис господин килнĕ. Вăл 1936—1938 çулсенче США-н Совет Союзĕнчи посолĕ пулса ĕçленĕ.

Центральнăй аэродромра Джозеф Э. Дэвис господина Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Америка çĕршывĕсен отделĕн заведующийĕ Г. Н. Зарубин юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протоколсен отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăнусен Отделĕн Начальникĕ полковник В. Н. Евстигнеев тата çавăн пекех Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посол В. Стэндли господин ертсе пынипе Америка Посольствин членĕсем кĕтсе илнĕ.

ДЭВИС ГОСПОДИН СОВЕТ ПИЧЕЧĔН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕНЕ КАЛАНИ

Дэвис господин совет пичечĕн представителĕсене çапла каланă:

«Кĕске вăхăтлăха та пулин Мускава çĕнĕрен килсе курни мана савăнтарать. Служба тивĕçĕпе кунта пурăннă чухне эпĕ кунти нумай çынсемпе ăшшăн та туслăн çыхăннăччĕ. Вĕсемпе курнăçса калаçасси маншăн пысăк савăнăç пулса тăрать.

Эпĕ кунта пирĕн аслă президентăн Рузвельт господинăн специальнăй посланецĕ пулса Сирĕн аслă çулпуçа премьер Сталина послани илсе килни маншăн уйрăмăнах пысăк телей пулса тăрать.

Эсир гунсене çав тери хăватлăн хирĕç тăни пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе ячĕ. Чăнах та, эсир хирĕç тăрасси чăннипех çапла пулассине эпĕ хăй вăхăтĕнче пĕлсе каланăччĕ. Идеологи тĕлĕшĕпе хăшпĕр концепцисенче пирĕн хушăмăрта уйрăмлăхсем пур пулин те, пилĕк çул ĕлĕкрех Мускавран эпĕ граждан тата çар тĕлĕшĕпе ĕçлекен сирĕн аслă руководительсене тата Совет Союзĕн халăхне пĕтĕм чĕререн юратса, хисеплесе, унпа çав тери хĕпĕртесе тухса кайрăм.

1941 çулхи июнь уйăхĕнче совет халăхне Германи агрессийĕ ним чыса пĕлмесĕр çав тери тискеррĕн тапăнчĕ. Совет халăхĕ çав агрессие хирĕç мĕн тери хăватлăн тăни çинчен калакан страницăсенчен чаплăраххи историре урăх çук та. Çав хирĕç тăнин историйĕ—вăл эпопея. Çынсем ирĕклĕхе юратма пăрахиччен вăл эпопейăна нихăçан та манмĕç.

Сирĕн Сталинград вилĕмсĕр. Вăл ытти хуласем—пысăккисем те, пĕчĕккисем те—мĕнле кĕрешнине кăтартса парать; çав тери пысăк йывăрлăхсем çитсе çапнă пулин те, совет халăхĕ вĕсенче пĕр парăнмасăр хаяррăн çапăçса ĕмĕрлĕхе чапа тухрĕ.

Вăрçăра эпир çĕнтерсен, Совет Союзне эпĕ пĕрре кăна мар ахаль йĕркепе килсе кайса кунти пысăк çĕнтерӳсемпе тата прогресспа паллашăп, кесе шанатăп, çав çитĕнӳсемпе прогресс малашнехи пурнăçра Сирĕн чаплă пуласса ĕненетĕп.

Манăн тăван çĕршыв тĕнчери хальхи вăрçа ыттисенчен каярах хутшăнчĕ. Анчах çапах та эпĕ Сире çакна ĕнентерме пултаратăп: çынсен резервĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те, механизированнăй вăй-хăват енчен те эпир халĕ мĕн тума май пуррин чи çӳлти точкине хăпарса çитрĕмĕр.

Премьер Сталин, премьер-министр Черчилль, президент Рузвельт тата ытти пĕрлешӳллĕ нацисен лидерĕсем нумай малалла курса ертсе пынипе фашистсен агрессине тĕппипех аркатса тăкасси çĕр иртнĕ хыççăн кун çуталса тухнă пекех уççăн курăнса тăрать».

А. М. Горький ячĕпе пулнă вечер

Майăн 19-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Академи театрĕнче А. М. Горький ячĕпе литературăллă пысăк вечер пулса иртрĕ. Вечера Чăвашсен Горький ячĕпе тăракан Центральнăй библиотеки организациленĕ.

Вечерта Мускаври литературовед С. В. Иванов «Горький—патриот» ятлă темăпа доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн чăваш халăх поэчĕ Н. И. Шелеби хăйĕн «Максим Горький» ятлă поэмин пĕр сыпăкне, «Чĕнетĕп» ятлă сăввине хавхаланса вуласа пачĕ. Халăх поэчĕ С. В. Эльгер М. Горькин «Тăвăл хыпарçи» ятлă прозăллă сăввине вуласа пачĕ (вăл сăвва Эльгер хăй куçарнă). Чăваш поэчĕ Стихван Шавлы, вырăс поэчĕ А. Поморский фашизма хирĕç сăввисене вуласа пачĕç.

Билетсем сутса пухнă укçана йăлтах нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи библиотекăсене юсаса йĕркелес ĕçе яраççĕ.

Югослави посолĕ С. Симич господин хăйĕн верительнăй грамотисене пани

Майăн 19-мĕшĕнче кăнтăрла 12 сехетре Кремльре СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Югославин СССР-ти чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне С. Симич господина йышăннă. С. Симич господин М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Йышăнура С. Симич господинпа пĕрле Югослави посольствин советникĕ Р. Миринкович господин тата посольствăн военнăй атташи М. Логич подполковник пулнă. Посол вĕсене М. И. Калинин юлташпа паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протоколсен Отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсене панă хыççăн М. И. Калинин юлташпа С. Симич господин пĕр-пĕринпе калаçнă.

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ БЕЛЬГИ ПОСОЛНЕ Р. ВАН ДЕ КЕРШОВ Д'АЛЛЕБАС ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Майăн 18-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Бельгин СССР-ти чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне Р. Ван де Кершов д'Аллебас господина йышăннă. Йышăну Р. Ван де Кершов д'Аллебас господин СССР Верховный Совет президиумĕн Председательне хăйĕн верительнăй грамотисене пама хатĕрленнĕ май пулса иртнĕ.

Ютçĕршывсенче

РУЗВЕЛЬТПА ЧЕРЧИЛЛЬ ПĔР-ПĔРИНПЕ КАЛАÇНИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире Рузвельт çапла каланă: Черчилльпе ирттерекен калаçусем ăнăçуллăн пулса пыраççĕ, çав калаçусем халĕ пĕтмен-ха. Канадăн премьер-министрĕ калаçусене хутшăнман-ха,—тенĕ.

США-РА ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ПРОДОВОЛЬСТВИ ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ НАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УÇĂЛНĂ

ХОТ СПРИНГС (Виргини штачĕ), майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта паян каçхине вăрçă хыççăнхи продовольстви ыйтăвĕсем пирки пĕрлешӳллĕ нацисен конференцийĕ уçăлнă. Конференцие 44 çĕршывран 150 делегат ытла пухăннă. Рузвельт конференцие послани янă.

Конференцие уçас умĕн пĕтĕм çĕршывсен делегацийĕсен председателĕсенчен тунă исполнительнăй комитет конференцин кун йĕркине ырланă тата Америка делегацийĕн руководительне Джонса конференцин вăхăтлăх председателĕ пулма çирĕплетнĕ.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ЭТТЛИ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатин хупă ларăвĕнче премьер-министр заместителĕ Эттли сăмах тухса каланă.

Вăл каланă тăрăх, Итали вăрçа хутшăннăранпа Британи империйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем Африкăпа Çывăхри Хĕвелтухăç фрончĕсенче мĕнпурĕ 220.000 çынна яхăн çухатнă. Вăл шута вăрçăра вилнисем, аманнисем, пĕр хыпарсăр çухалнисем тата тыткăна лекнисем те кĕреççĕ. Тăшманăн çакăн чухлĕ пĕтнĕ: Абиссини кампанийĕ вăхăтĕнче тата Сомалире Итали службинче тăнă 200.000 туземнăй салтак, 227.000 нимĕç тата 400.000 итальянец.

Юлашкинчен Эттли çакна шантарса каланă: «Тĕнчене асаплантаракан усалăн вăйĕсене пĕтерсе тăкас задачăна, Африкăра çав тери ăнăçуллăн пулса пынăскерне, эпир малалла хамăрăн союзниксемпе пĕрле Европăра та, Азире те, Лăпкă океанри утравсем çинче те вĕçне çитиччен туса пĕтерĕпĕр», — тенĕ.

Эттли сĕннипе общинăсен палати резолюци йышăннă. Çав резолюцире общинăсен палати Англин тата союзниксен Африкăра кĕрешнĕ хĕçпăшаллă вăйĕсен ĕçĕсене питĕ ырланă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Сардинири Альгеро портне тата аэродромне атакăланă. Вăйлă пушарсем тухни тата взрывсем пулни палăрнă.

Эгей тинĕсĕнче Англи истребителĕсем тăшман суднине путарнă.

Майăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен истребителĕсем çурçĕр Франципи тата Бельгири чугунçулсене, шоссесене тата противникăн сывлăшри вăйĕсен базисене атакăланă.

Бомбардировка тăвакан авиаци çав каçхинех кăнтăр Германири тĕрлĕ объектсене тапăннă тата тăшманăн шывĕсене минăсем пăрахса тухнă. Голланди çыранĕсем патĕнче тăшманăн суднисен караванне тапăнса, тăшманăн 3 суту-илӳ карапне тата каравана хӳтĕлесе пыракан 3 çар карапне сиенленĕ.

Ĕнер кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем тăшман йышăннă çĕршывсенче чылай объектсене вăйлăн тапăннă. Бомбăсем пуринчен ытла Лориан портĕнчи сооруженисем çине тата Бордори доксем çине пăрахнă. Бомбардировка ăнăçлăн пулса иртнĕ. Çапăçусенче тăшманăн истребителĕсене нумай персе ӳкернĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПАНТЕЛЛЕРИПЕ ТРАПАНИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: майăн 18-мĕшĕнче Америка авиацийĕ Пантеллери утравне тапăннă. Ку утрава вăрçă пуçланнăранпа та кун пек вăйлăн тапăнни пулман. Америкăн икĕ моторлă бомбардировщикĕсемпе истребитель-бомбардировщикĕсем утрав çине 100 тоннăна яхăн бомба пăрахнă.

Америка самолечĕсем Трапанине (Сицилия) тапăннă, тăшманăн 6 суднине çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Мальта утравĕ çинчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: иртнĕ каçхине Англи самолечĕсем тăшманăн Сицилири тата Хĕвеланăç Италири заводĕсене, гидросамолетсен базине, чугунçул сооруженийĕсене, паровозсемпе вагонсене, коммуникацисене тата ытти объектсене те атакăланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР Наркомлесĕн Атăл тăрăхĕнчи лесотехнически техникумĕ

1943—44-мĕш вĕренӳ çулне студентсем йышăнасси çинчен пĕлтерет.

Техникумра СССР-ти вăрман промышленноçĕ валли работниксем хатĕрлекен икĕ отделени пур: 1) вăрман хуçалăхĕ валли техниксем хатĕрлекен отделени тата 2) вăрман хатĕрлевĕн техник-технологĕсене хатĕрлекен отделени.

Вĕренесси 3 çул хушши вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ.

Туллимар вăтам шкултан тата 7-мĕш класран 1943 çулта вĕренсе тухнисене тата отличниксене испытанисемсĕрех йышăнаççĕ.

Урăх вырăнтан килнĕ студентсене общежити параççĕ. Столовăй пур. Вĕрентессе пысăк квалификациллĕ научнăй работниксем вĕрентеççĕ.

Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: вĕреннине ĕнентерекен свидетельство, автобиографи, сывлăх çинчен пĕлтерекен справка, çурални çинчен пĕлтерекен справка, виçĕ фотокарточка.

Заявленисене 1943 çулхи августăн 25-мĕшĕччен илеççĕ.

Занятисем сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене директор ячĕпе, çак адреспа ямалла: Мушмари поселокĕ, Звенигово районĕ, Мари АССР, Лесотехникум.

Военторг системинче Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Çĕрпӳре, Вăрнарта суту-илӳ, обществăллă апатлану тĕлĕшпе производство мастерскойĕсенче тата ялхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлеме главнăй тата старши бухгалтерсем кирлĕ.

Шупашкарта 8 çултан кая мар вĕреннĕ учениксем кирлĕ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРА çакăн пек работниксем кирлĕ: администратор, бухгалтер, сторожсем, дворник, билетерсем, уборщицăсем, художник, паровой отоплени механикĕ, водопроводчик, полотер-вахтер.
4—4

Чăваш АССР Наркомздравĕн малярии станцине Атăлăн сулахай енче малярипе вăрăмтунисемпе кĕрешме бонификаторсем кирлĕ. Хваттер параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Красноармейская урам, 3-мĕш номерлĕ çурт.

„Росглаввинон" Шупашкарти эрех комбинатне районсенче сад çимĕçсем тата çырла пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш çурт. Телефон 1—73 (пĕр звонок).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1335 Типография № 1, Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 53. 12 п.